# МОДЕЛЬ БИЗНЕСНЕ ПУÇĔПЕХ СИКМЕРĔ

Татьяна кунĕ



***«Йăл кулă йывăрлăхсене çĕнтерме пулăшать», — терĕ Татьяна Чашкина жюри ыйтуне хуравласа. Тĕрĕс те, хĕрачан хитре пичĕ йăл кулăпа йăлкăшать. Вăл хăйĕн çепĕç сассипе, ырă куллипе темле хытă чĕрене те çемçетет пуль. Раштавăн 6-мĕшĕнче Хусанта иртнĕ «Чăваш пики» конкурсра жюрипе куракансен чĕрисене чиперкке ытараймилĕхĕпе тыткăна илчĕ. Раштавăн 20-мĕшĕнче Тутарстан сар пики Мускав сцени çинче хуçаланчĕ. Пĕрремĕш конкурс хыççăнах Татьяна ыттисенчен чипертерехххи курăнчĕ. Хитре кĕпесемпе сцена çинче çӳренине пăхсан Татьяна тахçантанпа модель пулса ĕçлет тейĕн. Юрă шăрантарса акăш пек шурĕ, хитре авкаланчĕ. Ал ĕç, апат-çимĕç хатĕрлес конкурссенче те хăйне маттур кăтартрĕ. Мускав халăхĕ те хӳхĕм хĕре питĕ саврĕ, вăл сцена çине иккĕмĕш конкурсра тухсан «Татьяна» тесе кăшкăрса алă çупса саламларĕ.***

***Жюрипе куракансен шухăшĕсем пĕр пулчĕç: Татьяна Чашкинăна «Раççей чăваш пики» титулпа тивĕçтерчĕç.***

***Кам-ха вăл Татьяна Чашкина?***

Татьяна Çĕпрел районĕнчи Çĕнĕ Йĕлмел ялĕнче çуралса ӳснĕ. Вăтам шкул пĕтерсен хĕрача Ульяновск хулинчи автомеханика техникумне бухгалтера вĕренме кĕрет. Çулталăк та иртмест, пултаруллă хĕре тăван ялĕнчи Культура çуртне илемлĕх ертӳçи пулса ĕçлеме чĕнеççĕ. Татьянăн ашшĕпе амăшĕ колхозра ĕçлеççĕ, çавăнпа та укçа-тенкĕ енчен питĕ хĕсĕк çемьере. Чашкинсем пилĕк ача çуратса ӳстернĕ. Аслă ывăлĕпе икĕ хĕрĕ хăйсем çемье çавăрнă. Кĕçĕнни, Юля, шкулта вĕренет.

Татьяна техникумра куçăн мар майпа вĕренме куçать те клубра ĕçлеме тытăнать. Вунтăхăр çулхи чиперкке ялта уявсем йĕркелесе ирттерет.

***— Мĕнле-ха çапла пулса тухрĕ, Татьяна, бухгалтера вĕренетĕн, Культура çуртĕнче ĕçлетĕн?***

— Эпĕ ачаранах ташлама, юрлама юрататăп, шкулта иртекен концертсене, спектакльсене те ялан хутшăннă, сцена çине тухса хама кăтартма питĕ юратнă çав. Çавăнпах пуль илемлĕх ертӳçи пулма йыхравласан нумай шухăшламасăрах килĕшрĕм.

***— Апла пулсан эсĕ сцена çине тухма нихăçан та шикленмен?***

— Паллах, эпĕ артист мар, сцена çине тухас умĕн ялан хумханатăп. Хусанта иртнĕ «Чăваш пики» конкурса хутшăнни ман пурнăçра пысăк пулăм. Репетицисенче пирĕнпе мĕнле чаплă, паллă çынсем курса калаçнă. Пирĕн режиссер Изольда Генриевна Сахарова çинчен ырă сăмахсем калас килет. «Мисс Татарстан» конкурсăн президенчĕ пире, ялсенчен килнĕ хĕрсене, хитре утма, сцена çинче илемлĕ тытма çеç мар, этика йĕркисене те вĕрентрĕ. Пурнăçра чыслă, илемлĕ, аслă çын пулма тăрăшма хушрĕ. Мĕн чухлĕ ырă канаш пачĕ.

Хусанти чаплă чăвашсемпе паллашни те пирĕншĕн пысăк телей пулчĕ.

***— Конкурсра çĕнтерсе Мускава каятăп тесе шухăшланă-и?***

— Тĕрĕссипе каласан, ĕмĕтленнĕ. Хусанта çĕнтерсен мĕнле туйăмсем чунра пăтраннине астумастăп та. Парнесем, чечексем савăнтарчĕç.

Мускавра эпĕ нихăçан та пулса курман, çавăнпа та мана чи малтан илемлĕ хула тĕлĕнтерчĕ. Тĕрлĕ регионсенчен килнĕ чăвашсемпе паллашса калаçни интереслĕ пулчĕ. Мускавра чăвашсем епле туслă пурăнаççĕ иккен. Тĕп хуламăрта та тăван чĕлхемĕре манмаççĕ, пур енчен те культурăна аталантарма тăрăшаççĕ. Çакăн пек пысăк шайра «Раççей чăваш пики» конкурс йĕркелени те мĕне тăрать.

Мĕнле хумханнине каласа пама та çук, хĕрсемпе паллашса туслашсан кăштах лăплантăмăр. Эпир пĕр-пĕрин хушшинче ăмăртман, кашни хăйне евĕрлĕ хитре, кашнин хăйĕн кăмăлĕ, кашни пурнăçра тĕрлĕ çулсем суйланă.

***— Эсĕ пурнăçра мĕнле çитĕнӳсем тăвасшăн, çак конкурссем хыççăн мĕнле те пулин улшăнусем пулчĕç-и?***

— Эпĕ хам пурнăçра Ульяновск хулинчен инçерех ниçта та кайса курманччĕ. Акă 2002 çул вĕçĕнче пĕр уйăхра Хусанта, Мускавра пултăм. Тата ахаль мар, илемлĕх конкурсĕсенче çĕнтертĕм.

Халĕ эпĕ хама-хам ытларах шанатăп, паллах, чи малтан вĕренсе пĕтермелле, професси алла илмелле. Каярах курăпăр. Хусанти модельсен студине ĕçлеме чĕнчĕç, анчах ĕçе пăрахса пысăк хулана тухса каясси çăмăл мар.

***— Апла, модель бизнесне пуçĕпех сикместĕн?***

— Тен, сикĕттĕм те хулара пурăннă пулсан.

**Силпи ЕЛЕНИНА.**
**Фарит ГУБАЕВ сăнӳкерчĕкĕ.**

# ЮЛАШКИ СИГАРЕТ



Çуллахи каникул вăхăтĕнче кашни çулах пирĕн яла хулара пурăнакан ача-пăчасем хăйсен аслашшĕ-асламăш, кукашшĕ-кукамăшсем патне килсе тулаççĕ. Икĕвиçĕ уйăх хушши унта та кунта вырăсла калаçни кăна илтĕнсе тăрать. Ашшĕ-амăшĕсем нумаях пулмасть ялтан тухса кайса хулара вырнаçнă чăвашсем пулсан та вĕсен ачисем хăйсен тăван чĕлхине пачах та «пĕлмеççĕ». Килсе çитеççĕ те çав «вĕсен кайăксем» аслăрах класра вĕренекен ял ачисене хăйсемпе явăçтарма пуçлаççĕ, эрех ĕçме, пирус туртма, «витĕмлĕ» сăмахсем калама хăнăхтараççĕ, каратэ, бокс вăййисен хăш-пĕр ансат меслечĕсене кăтартса ял ачисемшĕн чăн-чăн «авторитет» пулса тăраççĕ. Çав вăхăтрах ялти якăлти хĕрсемпе улах вырăнта «йăпанас» шухăшпа антăхса çӳреççĕ хăйсем.

Пирĕн ялти Кирук тетепе Çирук аппан хулара пурăнакан пĕртен-пĕр хĕрĕн Эдик ятлă пĕртен-пĕр ывăлĕ çуллахи каникул вăхăтĕнче çулсеренех кукашшĕпе кукамăш патне канма килет. Тăхăр класс вĕренсе пĕтернĕскер, иртнĕ çул та килчĕ вăл яла уçă сывлăшпа сывлама, ăшă сĕтпе сывалма. Пĕвĕ ши! кайнă, пи! кайнă, хăй сысна пекех самăрланнă. Килсе çитрĕ те çамрăк ачасен умĕнче хăйĕн «паттăрлăхĕпе» мухтанма, вĕсене кĕрешӳ, бокс меслечĕсене кăтартма, вĕрентме пуçларĕ... Акă мĕн пулчĕ пĕррехинче.

Çурла уйăхĕ. Тырпул пухса кĕртнĕ вăхăт. Çурçĕр иртнĕ. Пирĕн таврари паллă, чапа тухнă комбайнер Александр (пурте Сан Саныч тесе чĕнеççĕ ăна) ĕç хыççăн килне таврăнать. Ĕшеннĕ вăл — йывăррăн утать, ăна ӳсĕр çын теме те пулать. Анчах та ӳсĕр мар Сан Саныч, эрех-сăра таврашĕпе тĕлсĕр те виçесĕр ашкăнмасть. «Хăть пĕрре те пулин ӳсĕр таврăн-ха эсĕ киле, атту сана ятлама сăлтав та çук», — терĕ ăна арăмĕ пĕррехинче кула-кулах.

Урам варринче пĕр ушкăн ача-пăча тăрать. Шавлă калаçаççĕ, хытă кулаççĕ хăйсем. «Эх-хе-хех! Тутисем çинче амăшĕсен кăкăр сĕчĕ типсе çитмен, эрех ĕçме пуçлаççĕ хальхи çамрăксем», — тесе хашлатса илчĕ те ĕçрен таврăнакан комбайнер çамрăксен ушкăнĕ патне çитсе чарăнчĕ. Вăл сăмах чĕнсе елкĕриччен:

— Мужик, дай закурить, — терĕ çӳллĕ та самăр йĕкĕт. Сан Саныч пуçне çĕклесе пăхрĕ — ку çынна паллаймарĕ.

— Çук манăн туртмалли... Чăваш ачи пулĕ-ха, мĕншĕн тăван чĕлхепе калаçмастăн?

— Не понял... Ну, ты, дашь сигарету или нет?

— Çук манăн сигарет. Туртса пĕтертĕм...

— Ах ты, сволочь! Жмот! Мразь! Охренел в натуре?! Это не сигарета?! — тесе Сан Санычăн кăкăр кĕсйинчен пирус пачки туртса кăларчĕ.

— Унта пĕрре çеç, юлашки, хам валли.., — теме ĕлкĕрчĕ çеç чапа тухнă комбайнер, палламан çын ăна сылтăм аллин чăмăрĕпе хырăмĕнчен çапрĕ:

— А ну, братва, налетай!.. Отработайте приемы бокса «хук» правой, «хук» левой, — тесе команда пачĕ.

Леш «хунвейбинсем», эрех пăсĕпе ăсĕсене çухатнăскерсем, çакна çеç кĕтнĕ пек, хăйсен ашшĕ-амăшĕсенчен аслăрах, таврара паллă Сан Саныч çине урнă йытăсем пек сиксе ӳкрĕç, çапрĕç-тапрĕç... Çывхарса килекен машина çутине курсан çеç чăл-пар тарса пытанчĕç.

Çамки çине мăкăль сиксе тухнă, куçĕсем кăвакарнă, тутисем пашалу пек кӳпченĕ, юнпа вараланнă, ӳсĕр çын пек сулкаланса аран-аран урисем çинче тăрать Сан Саныч... Ялта, районта, хамăр тавралăхра чапа тухнă комбайнер мăшкăл курса юлчĕ тусанлă çул варринче пĕр-пĕччен. Унăн ури патĕнче пĕртен-пĕр сигарет — юлашки сигарет тăлăххăн выртать. Ун çине Сан Саныч çиллессĕн пăхрĕ те урипе таптарĕ, юнлă сурчăк лаплаттарса хучĕ те килĕ енне сĕнкĕлтетрĕ.

**P.S.** *Çак инкеклĕ кун хыççăн Сан Саныч эрех-сăра ĕçме, пирус-сигарет туртма пачах пăрахрĕ.*

**Валентин ЕФРЕМОВ.**
**Нурлат районĕ,**
**Вăтам Хăмăшлă.**

**Галина КĔМĔЛ**

* * *

*Килсе кур-ха мана, йăлăнатăп,*
*Килсе кур-ха паян, ан ӳркен.*
*Тем пекех эп сана тархаслатăп*
*Тепĕр хут уйăрăлса кайиччен.*

*Килсе кур-ха мана, тен, ăнланăн*
*Юрату пĕрре çеç пулнине.*
*Юратсан ниепле те манаймăн,*
*Каçарса ал парар пĕр-пĕрне.*

*Килсе кур-ха мана, килсе кур-ха,*
*Тархаслатăп сана: килсе кур!*
*Ыр сăмах каласа сывлăх сун-ха,*
*Сан валли тĕнчере: эпĕ — пур!*

*Килсе кур-ха мана, килсе кур...*

* * *

*Шур сухаллă качака*
*Тухрĕ тăчĕ çул çине.*
*— Ме-ке-кек, — тет*
*майрака,*
*Чăмласа купăстине.*

*— Кăçал эпĕ — хисепре! —*
*Тăрăс тапрĕ урипе. —*
*Эп кăтартăп-ха сире!*
*Сик! сиктерĕп çăвĕпе.*

*Манпа лăпкă пулмалла,*
*Сухала юрамалла.*
*Вара пулĕ килĕшӳ,*
*Çураçу та савăшу.*

**Михаил КРАСНОВ**

## ХĔЛ

*Те савсах чĕпĕтрĕ,*
*Аскăн хĕл питрен.*
*Чун савни пек кĕтрĕ,*
*Йăл кулса хитрен.*

*Нăтăр-нăтăр турĕ,*
*Таса шурă юр.*
*Хĕл кĕпине çурĕ,*
*Ĕçченлĕхне кур.*

*Шурă кĕрĕк тăхăннă*
*Ушкăн хурăнсем*
*Пĕр çĕре пухăннă,*
*Тăрăн тĕлĕнсе.*

*Ман çине пăхаççĕ*
*Кулăпа çиçсе.*
*Çут кĕмĕл пухаççĕ,*
*Туй парни, виççе.*

*Кăкăр тулли юрă,*
*Юрлассăм килет.*
*Тӳпе янкăр, тăрă,*
*Тыткăна илет.*



Юрий КАПИТОНОВ ӳкерчĕкĕ.